26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
16
ВЫРСАРНИКУН
12(6507) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЭЛЕКТРОСТАНЦИСЕНЕ КĂТАРТУЛЛĂН ĔÇЛЕКЕН ТĂВАР

Кăçалхи хĕле республикăри предприятисем иртнĕ çулхисенчен лайăхрах хатĕрленсе кĕтсе илчĕç.

Иртнĕ çулсенче хăшпĕр предприятисем хĕле начар хатĕрленнĕ пирки, хĕл варринче пысăк йывăрлăхсем тӳснĕ. Канашри вагонсем юсакан заводри электростанци, сăмахран, хĕле кирлĕ таран топливо хатĕрлемен тата станцири оборудованисене тĕпренех юсас ĕçе туса çитермен пирки, чарăна-чарăна ларнă. Çакна пула завод уйăхран-уйăхах государство заданине пурнăçласа пырайман.

Калас пулать, ку электростанци кăçалхи хĕле те çителĕклех хатĕрленсе кĕтсе илмен. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, уйрăм ĕçсем енĕпе чылай утăмсем тунă пулин те, вĕсемпе килĕшсе ларма çук.

Канашри вагонсем юсакан заводри электростанци (начальникĕ Петухов) 1943 çулта электроэнерги памалли çулталăкри плана 90 процента яхăн пурнăçланă. Халĕ вара станцире топливо çукпа пĕрех. Темиçе уйăх ĕнтĕ, транспортернăй лента юсавлă марри пула, станци начар ĕçлет. Çавăн пекех кунта ремонт ĕçне те вĕçлемен. 400 лаша вăйлă дизеле юсаса пĕтермен. Кадрсем çителĕксĕр. Паянхи куна 8 кочегар, 4 машинист çитмеççĕ. Çак асăннă çитменлĕхсене пĕтерессишĕн сахал тăрăшаççĕ. Завод начальникĕн хуçалăх енĕпе ĕçлекен помощникĕ Воробьев, техснаб начальникĕ Лисицын юлташсем электростанцие кирлĕ япаласене вăхăтра пулса памаççĕ.

Шупашкарти водосвет (директорĕ Варфоломеев) 1943 çулта электроэнерги памалли çулталăкри плана 55,5 процент çеç пурнăçланă. Хулари предприятисемпе учреждениесене тата халăха электроэнерги планпа пăхниннчен 1.378 пин киловатт-сехет сахалтарах панă. Водосвет руководителĕсем топливăна перекетлессишĕн кĕрешмеççĕ. Кăçал укта нефте 162,4 тонна ытларах расходланă. Водосветра машина хуçалăхне те начар пăхаççĕ. Машинăсене тĕпренех юсамалли çулталăкри плана 60 процент яхăн кăна пурнăçланă.

Электростанци начар ĕçленине пула, 1943 çулта хулари 6 предприяти кăна çĕршыва фронта темиçе миллион тенкĕлĕх продукци парайман. Сăлтавĕ—пур машинăсемпе те тĕрĕс уса курманнинче, машинăсене юсамалли графике пăсниннче, ремонт пахалăхĕ начаррине.

Машинăсене юсас тата запаслă пайсем туса кăларас тĕлĕшпе электростанцие пулăшнă. Квалификациллĕ кадрсем те ярса панă. Апла пулин те, электростанци çав-çавах çителĕксĕр ĕçлет-ха.

Халĕ электростанцисем йывăр та ответлă тапхăра кĕчĕç. Хĕл вăхăтĕнче электростанцисене пĕр чăрмавсăр ĕçлеттермелле тăвас тесен, энергетиксен хăйсен умĕнчи тивĕçе чыслăн пурнăçламалла. Электростанцисене сехет механизмĕ пек тип-тикĕс ĕçлеттермелле тăвассишĕн тăрăшса, çав ĕçри работниксен техникăллă эксплоатацин правилисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла. Çакă вăл кашни работникшĕн закон пулса тăрать. Хĕллехи вăхăтра энергетиксен ĕçри ответлăхне татах та ӳстермелле, кирек мĕнле постра ĕçлекенĕн те ĕç дисциплинине çирĕп тытса пымалла.

Электростанцисем пур условисенче те лайăх ĕçлеччĕр тесен, ĕçри культурăлăха ӳстерни те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кашни агрегата çирĕп режим тăрăх ĕçлеттермелле, оборудованисене тытмалли правилăсене тĕплĕн пурнăçласа пымалла. Анчах та электростанцисенче çакна кирлĕ пек пурнăçласа пыни курăнмасть-ха.

Электростанцисен руководителĕсем пĕлтĕр пулнă çитменлĕхсенчен хăйсене валли тивĕçлĕ вывăд туманни халĕ те ĕçре чăрмав кӳрет. Электростанци ĕçне кадрсем татса параççĕ. Республикăри электростанцисенче вара ку ыйту, калама çук начар вырăнта тăрать. Кадрсем хатĕрлес ĕçе электростанцисен руководителĕсемпе парторганизацисем хăйсен çине илме тивĕçлĕ.

Шупашкар хулинчи хальхи предприятисемпе çĕнĕрен тăвакан предприятисен ĕçне вăйлатса пырас тĕлĕшре Атăл леш енчи электростанци питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çĕнĕ электростанцие хăвăрт ĕçе ярасси республикăри партипе совет тата хуçалăх организацийĕсен чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать.

Райсоветсен хăшпĕр исполкомĕсем Атăл леш енчи электростанци строительствине рабочисем çителĕксĕр парса тăраççĕ. Уйрăмах Вăрмар, Элĕк, Калинино, Советски, Куславкка районĕсем ку ĕçре юлса пыраççĕ. Çакна малашне ниепле те тӳссе тăма çук.

Строительство ĕçĕ вăраха кайни ĕç вăйĕпе туллин усă курманнинчен те нумай килет. Строительство руководителĕсен çак çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă мерăсем йышăнмалла. Строительствăра палăртнă ĕçсене вăхăтра туса çитермелле.

Челябинскри электростанци работникĕсем икĕ уйăх каярах мĕнпур энергетика работникĕсене хĕллехи вăхăтра электростанцисене пĕр чарăнмасăр, тип-тикĕс ĕçлесе пымалла тăвассишĕн ăмăртăва тухма чĕнчĕç. Хăйсен чĕнĕвĕнче вĕсем: кăçалхи хĕле тĕплĕн хатĕрленсе, электростанцисене пĕр аварисĕр ĕçлеттеретпĕр, тенĕ. Çак тĕлĕшпе вĕсем конкретлă обязательствăсем илнĕ. Ăмăртăва пирĕн республикăри электростанцисен работникĕсем те хутшăнчĕç. Халĕ ĕç—илнĕ обязательствăсене тимлĕн пурнăçласа пырассинче.

Геройлă Хĕрлĕ Çар фронтра çĕнĕрен-çĕнĕ чаплă çĕнтерӳсем туса пырать. Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерĕвĕсене тылри ĕççыннисем ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе ответлеççĕ. Энергетиксем те хăйсен умĕнчи задачăна тивĕçлипе пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ.

Электростанци работникĕсем! Хăвăр ĕçе пур условисенче те тип-тикĕс туса пырассишĕн кĕрешĕр! Фронтпа çĕршывшăн ĕçлекен предприятисем сирĕнтен ытларах та ытларах энерги ыйтаççĕ. Çак тивĕçе чыслăн пурнăçласа пырăр! Паттăр Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă куна çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Белоруссн фрончĕн çарĕсем, ая кран çавăрса илмелли ăста маневр туса, паян, январĕн 14-мĕшĕнче Белоруссн ССР-ĕн область центрне—МОЗЫРЬ хулине тата КАЛИНКОВИЧИ хулине пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманăн çапăçса хаяр пурнакан ытти 40 пункта ытла йышăнса илнĕ, вăл шутра ГОРБОВИЧИ, РУДНЯ ГОРБОВИЧСКАЯ, БОБРЫ, КОЗИНКИ, БОРИСКОВИЧИ, ЗАГОРИНЫ, КОСТЮКОВИЧИ, ЖАХОВИЧИ, СКРЫГАЛОВО, БЕСЕДКИ ятлă пысăк ялсем тата КЛИНСК, КАЧУРЫ, КОЗИНКИ чугун çул станцийĕсем.

САРНЫ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă. Ровно облаçĕнче СТЕПАНЬ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата урăх 30 пункта ытла йышăннă.

НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, çапăçусем хыççăн темиçе ял тытса илнĕ.

ВИННИЦА хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман хотине танкĕсен пысăк вăйĕсен контратакине ăнăçлăн сире-сире янă, тăшмана çынсем тата техника енчен пысăк сухатусем кӳнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка туни, тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăни тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçни.

Январĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 96 танкне персе çĕмĕрнĕ, пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Белоруссн фрончĕн çарĕсем çапла наступлени туса пынă. Совет танкисчĕсемпе пехотинецĕсем, çав тери хăвăрттăн малалла куçса пырса, Калинковичи хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн пысăк вăйĕсене аркатса тăкнă. Горбовичи ялĕ патĕнчи çапăçура пирĕн танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем нимĕçсен 27 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 40 тупăпине ытла пĕтерсе тăкнă тата тăшман пехотине пĕр полка çити вĕлерсе пĕтернĕ.

Çав районрах нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех юсавлă 11 танк, 20 тупă, 10 бронетранспортер тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Совет пехотин хĕвелтухăç енчен тапăнса пыракан чаçĕсем Припять шывĕ урлă каçмалли кĕпер патне тухнă та тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене пӳлсе лартнă. Нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, пирĕн боецсем Мозырь хулин хĕвелтухăç пайне вăркăнса кĕрсе кайнă. Çапăçусем урамсенче пуçланса кайнă. Çав хушăра совет кавалерисчĕсем хулана кăнтăр енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Тепĕр кавалери чаçĕ Припять шывĕ урлă каçнă та Калинковичи хулинчен хĕвеланăçнерехре чугун çула татнă. Çапла тăшмана пур енчен те пырса çапма тытăннă, вара унăн оборони йĕркерен тухнă. Паян совет çарĕсем, тăшмана татăклăн пырса çапнă та, Белоруссин область центрне—Мозырь хулине тата Калинковичи хулипе пысăк чугун çул узелне тытса илнĕ. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе те тата техника енчен та питĕ пысăк çухатусем кӳнĕ. Нимĕçсем, каялла васкасах чакмалла пулнă пирки, тупăсем, автомашинăсем, боеприпаспа çар пурлăхĕн склачĕсем нумай пăрахса хăварнă. Тыткăна илнисен хисепĕ чылаях пысăк.

* * *

Сарны хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени боецĕсем Горынь шывĕ урлă каçнă та, хаяррăн çапăçнă хыççăн, Ровно облаçĕнчи Степань ятлă район центрне тытса илнĕ. Кун каçиччен пирĕн çарсем халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Ровно облаçĕнче кĕрешекен партизансем совет чаçĕсене активлăн пулăшнă, шоссе çулĕпе куçса пыракан нимĕç пехотин колоннине аркатса тăкнă. Степань район центрĕшĕн пынă çапăçура кăна нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем тăшманран çар пурлăхĕ турттарса пыракан пысăк обоз тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Новоград-Волынский хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă хыççăн, лайăх позицисем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилĕне çити выртса юлнă. Нимĕçсен 6 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 5 тупăпине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр районра пирĕн автоматчиксем пĕр яла вăркăнса кĕрсе кайнă та гитлеровецсен пĕр ротине пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 2 танкне тытса илнĕ. Тăшманăн пырса çитнĕ чаçĕсем çав яла каялла туртса илме хăтланнă, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулман.

* * *

Винница хулинчен хĕвелтухăçнерехре çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Хăйĕн халран тухнă чаçĕсене çĕнĕ вăйсем хушса парса тата танксен пысăк вăйĕсене илсе пырса, тăшман кун каçиччен темиçе контратака та туса пăхнă. Пĕр участокра нимĕçсем хăйсен 100 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппийсене çапăçăва кĕртсе янă. Совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем тăшманăн 20 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 6 туппине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен пехотине минометсемпе тата пулеметсемпе чăтма çук вăйлăн пенипе кĕтсе илнĕ, гитлеровецсем тӳсеймесĕр ним йĕркисĕр каялла чакнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем тăшман контратакисене ăнăçлăн сире-сире ярса, 2.000 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, 35 танк тата 29 бронемашина çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, 9 бронетранспортерпа 120 автомашина пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Хура тинĕсре тăшманăн 2 баржине тата 1.500 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* * *

Партизансен Гастелло ячĕпе тăракан отрячĕ Барановичи облаçĕнче укрепленисем тăвакан нимĕçсене тапăннă. Партизансем тăшманăн 40 салтакне пĕтерсе тăкнă, 2 автомашина сирпĕнтерсе янă. Тата çав отрядри подрывниксен ушкăнĕ тăшман çарĕсене турттарса пыракан чугун çул эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушенире гитлеровецсем нумай вилсе пĕтнĕ е аманнă. Белосток облаçĕнче кĕрешекен Богдан Хмельницкий ячĕпе тăракан отрядри партизансем нимĕç помещикĕн именине вут тивертнĕ. Пушарта тырă склачĕсем çунса кайнă.

* * *

Новоград-Волынский хули районĕнче нимĕçсен 147-мĕш охраннăй дивизийĕнчен 270 салтак тыткăна паранна. Çав дивизи штабĕн тыткăна парăннă телефонисчĕ салтак Артур Фрезе çапла каласа панă: «Вырăссем çав тери хăвăрт наступлени туса пыни нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене хăраса пăрахрĕ. Тыл начальникĕ Хайле капитан салтаксем умĕнчех тарăхса çапла каларĕ: «Мĕн пирки ячĕç-ха пире кунта? Дивизин çапăçмалăх вăйĕ çук, вăл хăй йышăнса тăракан позицисене хӳтĕлеме пултараймасть. Вырăссем пире пурне те пĕтерсе тăкаççĕ», — терĕ. Совет танкĕсем эпир тăракан вырăна шăтарса кĕрсен, эпир кăнтăралла чакма тытăнтăмăр. Анчах вырăс автоматчикĕсем эпир чакмалли çулсене татма ĕлкĕрнĕ те. Офицерсем, салтаксене пăрахса, тарса çухалчĕç. Дивизи командирĕ генерал-лейтенант Матерштон хăй çинчи погонсемпе орденсене мĕнле татса илнине эпĕ хам куçпах куртăм. Ун хыççăн вăл таçта пытанчĕ, эпир ăна урăх курман. Офицерсем пăрахса тарнă хыççăн, эпир çĕрĕпех вăрманта çĕтсе çӳрерĕмĕр, йăлт халран ӳкрĕмĕр. Мĕн те пулин тумалла пулчĕ. Вара эпир çапла йышăнтăмăр: çак инкеклĕ ĕçре тыткăна парăнниинчен лайăххи урăх ним те çук. Хамăрăн пĕтĕм хĕçпăшала тата боеприпассене эпир вырăс офицерне патăмăр».

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотисене пани

Наградăланисен ушкăнне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ 1944 çулхи январĕн 14-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене панă.

Шоссе çулĕсене тăвас ĕçе ерсе пурнăçа кĕртнĕшĕн хисеплĕ грамотăсене çак юлташсем илнĕ: 6-мĕш автоколонна шоферĕ П. В. Буданов, çулйĕр управленин 4-мĕш районĕн кĕперсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен пайĕн начальникĕ Л. А. Гейнеман, строительствăн 4-мĕш районĕнчи шофер В. К. Дмитриевских, автобаза слесарĕ В. М. Исаев, 6-мĕш автоколоннăн эксплоатаци начальникĕ С. Г. Константинов, строительство десятникĕ Е. И. Кудрявцев, строительствăн 4-мĕш районĕнчи автоколоннăн старшин механикĕ Н. Д. Лавров, В. А. Левин, строительство районĕн прорабĕ С. Н. Макаров, В. А. Обухов, 4-мĕш номерлĕ строительство начальникĕн помощникĕ А. П. Аракчеев, техника материалĕсем тăратакан конторăн начальникĕ И. Н. Пантелеев, автоколонна начальникĕ В. И. Потапов, Р. Р. Романов, А. Н. Рудаков, С. К. Саракеев строительствăн 4-мĕш районĕн главнăй механикĕ М. И. Сосновский, Д. В. Стяжков, строительствăн 4-мĕш районĕн десятникĕ М. Ф. Тарасенко, строительствăн 4-мĕш районĕн начальникĕн заместителĕ Д. И. Чимаров тата çулйĕр управленин иккĕмĕш пай начальникĕн заместителĕ П. А. Шувалов юлташсем.

Кун хыççăн всевобуч икĕ çул тултарнă ятпа наградăланисене хисеплĕ грамотăсем панă. ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн çарĕç пайĕн инструкторĕ Н. Н. Краснов, Чăваш АССР Çарĕç Халăх Комиссариачĕн всевобуч пайĕн инструкторĕ майор С. Д. Лавринович, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕ В. Н. Никишова, Шупашкарти всевобуч пункчĕн начальникĕ, запасри командир М. Я. Саначин тата всевобуч пункчĕн начальникĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ А. Н. Студенецкий юлташсем Хисеплĕ грамотăсем илнĕ.

Малалла Хисеплĕ грамотăсене Совет медицинин 25 çул тултарнă ятпа наградăланă медработниксене—Шупашкар поликлиникин лаборатори заведующийне В. А. Иванова юлташа, Чăваш аптекоуправленин химипе фармацевт лабораторийĕн директорне А. Б. Капитонов юлташа панă.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй агрономне А. М. Беляев юлташа—ялхуçалăхĕнчи лайăх ĕçсемшĕн, махорка фабрикин главнăй механикне В. А. Кудряшов юлташа—производствăна ăнăçлăн ертсе пынăшăн Хисеплĕ грамота панă.

Хисеплĕ грамотăсем илнисен ячĕпе Саначин, Студенецкий, Беляев тата ытти юлташсем сăмах тухса калана.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Хисеплĕ грамотăсем илнисене саламлана, малашнехи ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума сунна.

Пирĕн земляка—А. Н. Боголюбов генерал-лейтенанта 1-мĕш степень Богдан Хмельницкий орденĕпе наградăлана

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи январĕн 10-мĕшĕнчи Указĕпе боевой операцисене ăнăçлăн ертсе пынăшăн, çав операцсене пула нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çитĕнӳсем тунăшăн Хĕрлĕ Çар генералĕсемпе офицерĕсен пысăк ушкăнне Суворов, Кутузов тата Богдан Хмельницкий орденĕсемпе наградăлана.

Наградăланисем хушшинче пирĕн земляк генерал-лейтенант Александр Николаевич Боголюбов пур. Ăна 1-мĕш степень **Богдан Хмельницкий** орденĕпе наградăлана.

Чугун çул транспортне—вутă

Чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттарасси паянхи кунри пысăк та ответлă ĕç пулса тăрать. Çакна лайăх ăнланса илнĕ Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Вăрнар районĕсем çак ĕçе ăнăçлăн туса пыраççĕ.

Йĕпреç районĕ 1943 çулта вутă хатĕрлесе турттармалли плана срокчен пурнăçлана, халь вăл 1944 çулхи 1-мĕш кварталти плана мартăн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăйя хурса ĕçлет.

Анчах Тăвай, Октябрьски, Элĕк, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле районĕсем ку ĕçре тӳсме çук юлса пыраççĕ. Асăннă районсем чугун çул транспортне вутă парса тăрас ĕçре юлса пыни йăлтах ĕç вăйĕпе, турттăм вăйĕ çителĕксĕр парса тăниинчен килет. Сĕнтĕр районĕн вăрмана çуран 80 çын, лашапа 80 çын ямалла пулсан, январĕн 13-мĕшĕ тĕлне çуран 69 çын, лашапа 22 çын кăна янă. Çавна пула ĕнтĕ район чугун çул валли вутă хатĕрлемелли плана 38,4 процент, турттармалли плана 45,3 процент çеç пурнăçлана. Элĕк районĕ те вăрман хатĕрлесе турттарма çынсем тата туртăм вăйĕ пачах çителĕксĕр мобилизацилене. Район вутă хатĕрлесе турттармалли çулталăкри плана 35 процента яхăн çеç пурнăçлана.

Мĕн шутлаççĕ-ши çак район руководителĕсем? Çĕмĕрле ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Волков юлташ ку ĕç районра ăнăçлăн пулса пырать тесе калать. Анчах район чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли плана 40 процент та пурнăçламан.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен чугун çул валли вутă хатĕрлес ĕçе кĕске вăхăтра вĕçлессишĕн мĕн пур иск майсемпе усă курмалла.

Республикăри предприятисемпе колхозсенче

Уйăхри задание 5 кун маларах тултарассишĕн кĕрешеççĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод 1944 çулăн малтанхи кунĕсенчех плана ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешĕве тухрĕ.

Слесарьсен Князев юлташ ертсе пыракан бригади пур заказсене те срокчен пурнăçласа пырать. Иванюк, Родионов, Смирнов слесарьсем задание кунсерен тăватă хут ирттерсе тултараççĕ.

Çавăн пекех Жебрак, Забиякин, Дмитриев юлташсем начальник пулса ĕçлекен цехсен коллективĕсем те ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ.

Ремонтно-механически цех (начальникĕ Жебрак) темиçе уйăх ĕнтĕ заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Çамрăк токарь Владимиров темиçе станок çинче ĕçлет. Вăл заданиc куллен 300—350 процент тултарать.

Завод коллективĕ январь уйăхĕнчи производство заданине 5 кун малтан пурнăçлассишĕн тăрăшать. Халь кашни рабочипе работница стахановла вахтăна тăнă.

Инструментальнăй цех коллективĕ Дарницăри вагонсем юсакан завода юсас ĕçре пулăшма тĕрлĕрен инструментсем туса пачĕ. Вăл шутра 18 напильник, токарь резцĕсем — 200, слесарь малатукĕсем — 7 тата ытти те. Мĕн пурĕ 559 инструмент туса панă. Ку ĕç малалла пырать.

Аш-какай параççĕ

КАЛИНИНО. Паянхи кун тĕлне район 1944 çулшăн 831,11 центнер аш-какай панă. Вăл хисепрен районра малта пыракан „Чăваш Коммуни“ тата „Первомайск“ колхозсем 1944 çулшăн государствăна аш-какай пĕтĕмпех парса татнă. Çавăн пекех Айкăшри Киров ячĕпе тăракан колхоз 1944 çулшăн 30,80 центнер, Малти Кăкшăмри „Красный кавалерист“ колхоз 12,08 центнер, Кăкшăмри „Знамя труда“ колхоз 26,83 центнер аш-какай пачĕç.

Б. Шорников.

ВЦСПС-па Халăх Комиссариачĕсенче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводрах хăварма йышăннă.

* * *

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, промышленноçăн пĕр отрасльĕнче ĕçлекен работниксен 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Володин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода виççĕмĕш преми памалла тунă.

Хĕрлĕ Çар генералĕсен, офицерĕсен, сержантсен тата рядовой составне Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани

СССР Верховный Совечĕ кăçалхи 10-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçу фрончĕсенче командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав ĕçре паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çар генералĕсен, офицерĕсен, сержанчĕсен тата рядовой составĕн пысăк ушкăнне Совет Союз Геройĕн ятне парса Ленин орденĕ тата «Ылттăн Çăлтăр» медаль парса наградăлана.

Хĕрлĕ Çар генралĕсене, офицерĕсене, сержанчĕсене, тата рядовойĕсене пурĕ 382 çынна Совет Союз Геройĕн ятне пана.

СОВЕТ СОЮЗĔН ГОСУДАРСТВЕННАЙ ÇĔНĔ ГИМНЕ ВĔРЕНЕÇÇĔ

Горький хулинче тата облаçри пур вырăнсенче те Совет Союзĕн Государственнăй çĕнĕ гимне массăллăн вĕренме пуçланă. Ленин ячĕпе тата Сталин ячĕпе хисепленекен культура дворецĕсенче, Хĕрлĕ Çар çуртĕнче, театрсенче, рабочисен клубĕсемпе общежитийĕсенче тата хулари студентсен общежитийĕсенче гимн текстне курăнмалла вырăнсене çырса çыпăçтарнă. Кунта кану сехечĕсенче темиçе пин рабочи çĕнĕ гимна вĕренет. Горький облаçĕн государственнăй филармонийĕ гимна вĕренес ĕçе облаçри радио саракан станци урлă организацилет.

ПУÇЛАМĔШ, ÇИЧĔ ÇУЛ ВĔРЕНМЕЛЛИ ТАТА ВĂТАМ ШКУЛСЕНЧЕ АЧАСЕН ПĔЛĔВĔПЕ ПОВЕДЕНИНЕ ПИЛĔК ТĔРЛĔ ОТМЕТКĂПА ПАЛЛĂ ТĂВАССИ

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Потемкин юлташ панă приказ тăрăх, январĕн 11-мĕшĕнчен пуçласа пуçламĕш, çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче ачасен пĕлĕвне тата вĕсем хăйсене хăйсем мĕнле тытнине (поведенине) пилĕк тĕрлĕ отметкăпа паллă тăваççĕ. Отлично, лайăх, вăтам, начар, питĕ начар тесе сăмахпа çырас вырăнне малашне: 5, 4, 3, 2, 1 тесе çыраççĕ.

(ТАСС).

Çуракине большевикла хатĕрленер

Укерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи «Осоавиахим» колхозăн малта пыракан 2-мĕш бригадин бригадирĕ **Е. А. Герасимов** юлташ.
Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

„Трактор" колхоз çуракине хатĕр

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Январĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Кипечри „Трактор" колхоз çуракине пур енчен те аван хатĕрленет.

Колхозăн 157 гектар çинче çур тыррисем акмалла, çав шутран 120 гектарĕ çинче кĕрхи çĕртме туса хăварнă. 60 гектар çинче юр тытнă. Вăрлăхсем çителĕклĕ, пĕтĕмпех сортласа пĕтернĕ.

Тырă сортлас çĕрте Т. Скворцовăпа А. Творогова юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç, вĕсем кулленех 16 центнер вырăнне 20 центнер сортласа пычĕç. Вăрлăхсен шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ: вир—98 процент, урпа—100 процент, кантăрвăрри—95 процент, тулă—95 процент, сĕлĕ—98 процент, пăрça—95 процент шăтнă. Пăрça йышши вăрлăхсене алăпа суйласа тасатаççĕ. Вăрлăхсене пурне те юр кĕмен тата типĕ амбарсене хунă, вĕсем мĕнле тăнине яланах сăнаса тăраççĕ.

Çуракине вăхăтра та пысăк пахалăхпа ирттересси туртăм вăйĕнчен нумай килет. „Трактор" колхозра лашасене хатĕрлеме тытăннă. Кашни кунах пĕр килограмм сĕлĕ, сĕлĕ уламĕ тата арпа çитереççĕ. Ку колхоз пысăк мар. Çуракинче 14 лаша ĕçлемелле, вĕсем валли 74 центнер сĕлĕ, 30 центнер вика ути уйăрса хунă. Конюхсем А. Дунаевпа И. Творогов юлташсем лашасене лайăх пăхаççĕ. Кашни лаша валли икшер сÿсмен пур, пĕрне ятарласах ака валли хатĕрленĕ, тилхепесем тата ытти ут таврашĕсем те çителĕклех.

Колхоз удобренисем пухса кăларас енĕпе аван ĕçлет. Уя пурĕ 2100 лав тислĕк кăларнă. 98 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Вĕсемсĕр пуçне 30 центнер кали тăварĕ тата пĕр центнер суперфосфат илсе килнĕ.

Вĕрен явакан колхозник Н. Никитин юлташ аван ĕçленине те палăртмалла, вăл сÿсрен 40 тилхепе явнă, вĕрен пăявĕсем нумай хатĕрленĕ. Вăл хăйĕн нормине кашни кунах ик-виçĕ хут ирттерсе тултарать.

С. ШАДИН.

Уйăхлăхра çине тăрса ĕçлĕпĕр

ВАРМАР. Январĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Вырăнти удобренисем хатĕрлес тата тислĕке уя кăларас енĕпе пирĕн район кая юлса пырать.

Вырăнти удобренисене хатĕрлесе уя кăлармалли уйăхлăхра республикăра тивĕçлĕ вырăн йышăнас тесе, эпир ялсоветсемпе колхоз председателĕсен канашлуне туса ирттертĕмĕр. Колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсем уйăхлăх вăхăтĕнче уя тислĕк кăлармалли тата вырăнти удобренисем пухмалли плана пурнăçлама пулчĕç. Колхоз членĕсем хушшинче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XVII пленумĕн решенийĕсене ăнлантарса пама районри активран 28 çынна колхозсене ятăмăр.

Паянхи кун тĕлне уя пурĕ 20.000 лав ытла тислĕк кăларнă, 315 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 309 центнер кĕл пухнă.

Вырăнти удобренисене уя кăларас пирки «Большевик», «Красный Мурат», «Заря», «Дружба» колхозсем ăнăçлă ĕçлеççĕ, çак колхозсем плансене йĕркеллĕн пурнăçласа пыраççĕ.

Анчах та районри «Ямбай» тата «Победитель» колхозсенче ку ĕçсене япăх ертсе пыраççĕ-ха.

Вырăнти удобренисене хатĕрлесе кăлармалли уйăхлăха мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилесе, партипе правительство пирĕн умма лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн тивĕçлĕ пек ĕçлĕпĕр.

П. БИКТИМИРОВ,
Вăрмар райсовет исполкомĕн председателĕ.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕН ОПЫЧĔПЕ ĔÇЛЕР

КАНАШ, январĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Уçырмари «Комбайн» колхоз çуракине ăнăçлăн хатĕрленет. Вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрленĕ тата вĕсене пĕтĕмпех сортласа хунă. Колхозра тислĕк, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл пухас ĕç аван пырать. Кашни колхозник хуçалăхĕ 2 центнер кĕл пухнă. Колхозниксем кăçал агротехника правилисене тĕплĕн пурнăçласа пырасшăн. Пур тырăсене те яровизацилесе акма шутлаççĕ. Яровизаторсем пулма Яков Николаев, Любовь Терентьева тата Надежда Сергеева юлташсене çирĕплетнĕ. Яровизаци тумалли çуртсем пур енчен те хатĕр, градусниксем çителĕклĕ.

50 урапа юсаса хунă, плугсене, сÿресене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. 2 сеялка хатĕр. Машинăпа акакансене те уйăрса хунă. Кунсăр пуçне тата кашни бригадăрах алăпа акакансене 2-шер çын уйăрнă. Вĕсем халĕ агротехникăна вĕренеççĕ.

Ака çинче вĕрен-пăявсем нумай кирлĕ пулнине шута илсе, вĕсене хатĕрлеме çителĕклĕ таран сÿс тата мунчала уйăрса хунă. Халĕ вĕрен-пăявсем яваççĕ. Ку ĕç вăтă çынсене явăçтарнă.

Районра юлса пыракан нумай колхозсенчен пĕри вăл — Маяк ялĕнчи «Новая жизнь» колхоз пулса тăрать. Унта акма 10 центнер тулă, 110 центнер çĕрулми çитмест.

Хире план тăрăх 800 тонна тислĕк кăлармалла, анчах пурĕ те 58 тонна кăна кăларнă. 40 центнер кĕл пухмалла, 7 центнер çеç пухнă. Колхозăн хирĕсенче торфлă шурлăхсем пур. План тăрăх 1500 тонна торф кăлармалла, паянхи куна пĕр лав та кăларман.

Колхозра ут таврашĕсем: хăмăтсем, йĕнерчĕксем, пĕкĕсем тата ыттисем те çитмеççĕ. Апла пулин те вĕсене хатĕрлеме е туянма шутламаççĕ-ха.

Районри чылай колхозсем, «Комбайн» колхозран пример илсе, çуракине тимлĕн хатĕрленме тытăнмалла.

(Хамăр корр.).

Осипов—ĕçкĕре, колхозниксем—нимере

ЙЕПРЕÇ. «Чувашия» колхозра çуракине хатĕрленме шухăшламаççĕ те-ха. Колхозăн план тăрăх уя 3.900 лав тислĕк кăлармалла, 60 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 70 центнер кĕл пухмалла пулсан, кунта ку таранччен нимĕн те туман.

Вăрлăхсене тасатман. 20 плугран 10-шне анчах юсанă, çитменнине вĕсене те ячĕшĕн кăна юсакаланă. Лашасене начар пăхнă пирки тата яланах нимесене çÿренĕ май, 15 лаша ытах та начарланнă. Колхоз председателĕ Осипов юлташ хăйĕн çывăх тусĕсене ниме тума колхоз лашисене парать. Çак юлашки вăхăтра кăна 30 ниме туса ирттернĕ, çав нимесен ĕçкисенчен Осипов сайра хутра кăна юлнă.

Колхозра туртăм вăйĕ çитменнине кура, колхозниксем 5 вăкăра ĕçе вĕрентме шутланăччĕ. Анчах вăкăрсене паяна çитсе те вĕрентме тытăнман-ха.

Колхоз председателĕ Осипов çуракине МТС тракторĕсемпе ирттересре шанать. Анчах та МТС валли чурка турттарса килесси çинчен мансах кайнă.

Çураки Осипова кĕтмест, çывхарнăçемĕн çывхарса килет. Халĕ вырăнти удобренисене пухса кăларас уйăхлăх пуçланчĕ. Çак уйăхлăха çине тăрса ĕçлесе ирттермелле. Осипов, ĕçкĕрен-ĕçке çÿресе, çураки çинчен маннă. Кун çинчен район руководителĕсем пĕлеççĕ, анчах ăна йĕркене кĕртме шутламаççĕ. **П. КУРАКОВ**

Донбасри ачасене тăванла пулăшар

СЕНТЕР. Районри комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче Донбасс облаçĕнчи ачасене тăванла пулăшас ĕç саралсах пырать. Январĕн 7-мĕшĕ тĕлне районĕпе вĕсем валли 25 пин тенкĕ укçа пухнă. «Хĕрлĕ Октябрь» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем 4 пин тенкĕ, «Пахарь» колхоз çамрăкĕсем 2 пин тенкĕ пухса пачĕç. Çак пархатарлă ĕçе шкул ачисем те активлăн хутшăнаççĕ. Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕренекенсем 1.575 тенкĕ, Уршашри вăтам шкулта вĕренекенсем 1.554 тенкĕ, Муркашри вăтам шкулти ачасем 1.427 тенкĕ пухса пачĕç.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) РАЙКОМĔ ОСОАВИАХИМ ĔÇНЕ ЛАЙĂХЛАТМА ПУЛĂШРĔ

Осоавиахимăн Элĕк районĕнчи организацийĕ 1943 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче республикăра кая юлса пыракан организаци пулнă.

ВКП(б) Элĕк райкомĕн бюровĕ, оборонăллă-массăллă ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-явса, Осоавиахим ĕçне лайăхлатма татăклă мерăсем йышăннă. Çакăн хыççăн Осоавиахимăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Колхозсенче, учрежденисемпе предприятисенче тата шкулсенче çĕнĕрен организацисем тунă. Ку тĕлĕшпе Осоавиахимăн районри совечне ялти актив тата призывниксем пулăшнă.

Осоавиахимăн Вутлан, Чăваш Сормĕ, Юманлăх шкулĕсенчи, сÿскантăр заводĕнчи тата ытти хăшпĕр учрежденисенчи пуçламĕш организацийĕсем чăк-чăнах патриотсен организацийĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем, ĕççыннисене сывлăшран тапăнассинчен сыхланма вĕрентнипе пĕрлех, походсем ирттереççĕ. Осоавиахимовецсен пухăвĕсенче ПВХО çинчен лекцисемпе докладсем ирттереççĕ, выставкăсем организациленĕ.

Малта пыракан организацисем халăха çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен йышне ÿстерессишĕн тимлĕн ĕçлеççĕ. Военрук Барковский (Юманлăхри туллимар вăтам шкул), Ефимов (Вутланти туллимар вăтам шкул), Васильева (Чăваш Сормĕнчен) юлташсем хăйсен организацийĕсенче оборонăллă-массăллă ĕçе тивĕçлипе туса пыраççĕ.

1943 çулта Осоавиахим райсовечĕ халăха çар ĕçне вĕрентмелли плана 107,2 процент пурнăçланă.

Хальхи вăхăтра Осоавиахимăн çар ĕçне вĕренмелли подразделенийĕсене районри халăха йышлăн явăçтарнă. Осоавиахим членĕсенчен 66 процентне çар ĕçне вĕрентнĕ.

Халăха сывлăшран тапăнассинчен сыхланма вĕрентмелли плана ăнăçлăн пурнăçланă. 1941 çулта вĕреннисенчен тепĕр хут вĕрентмелли плана 330 процент пурнăçланă. 1942 çулта вĕреннисене 1944 çулхи февраль уйăхĕччен пĕтĕмĕшпех тепĕр хут вĕренĕве явăçтарса çитереççĕ.

Осоавиахимовецсем фронта пулăшас тĕлĕшпе те нумай ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем 500 килограмм тимĕр-тăмăр пухнă. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем патне 500 парне ярса панă, 100 мăшăр чăлха, 150 мăшăр ăшă алшишш çыхса панă. Кунсăр пуçне фронтовиксен çемьисене вутă чылай турттарса панă.

Осоавиахимăн член укçине пухмалли плана иртнĕ çулта 228 процент тултарнă. Кăçал Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă тĕле 1944 çулшăн член укçисене пĕтĕмпех пухса çитереççĕ. Пур осоавиахим членĕсене те вĕренĕве явăçтарма палăртнă. Колхозсем, учрежденисемпе шкулсем çумĕнче çар ĕçне вĕренмелли ялан ĕçлекен подразделенисем пулаççĕ.

А. НИКИТИН.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франци çарĕсем тата Америкăн 5-мĕш çарĕ тăшман хаяррăн хирĕç тăнине пăхмасăрах сăртлăçырмаллă вырăнпа малалла кайса пыраççĕ. Черварона каялла тытса илес тĕлĕшпе тăшман тунă контратакăна сирсе пăрахнă; союзниксен çарĕсем çав хуларан тухса малалла куçнă. Англин 8-мĕш çарĕн фронтĕнче Çĕнĕ Зеландипе Англи чаçĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Йывăр тата вăтам бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем ĕнер тăшман аэродромĕсем çине тата ытти объектсем çине тапăннă.

Союзниксен самолечĕсем Шибеника çывăхĕнче (Югославия) тăшман карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ÇУРÇĔР ИТАЛИ ХАЛĂХĔ ФАШИСТСЕН ÇАРНЕ КАЙМА КИЛĔШМЕСТ

СТАМБУЛ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Итали фашисчĕсен хаçат журналĕсем ирĕксĕрех çакна йышăнса çыраççĕ: гитлеровецсем Çурçĕр Итали халăхне фашистсен çарне мобилизацилеме пуçланă. Анчах ку ĕç пĕтĕмпех путланса ларнă. Милан хулинче пухăнмалли пунктсене призыва пымалли итальянецсенчен мĕн пурĕ те 6 проценчĕ кăна пынă.

Миланра тата ытти хуласенче те чернорубашечниксене «дезертирсене тупса тытас тĕлĕшпе кирек мĕнле майпа та усă курма» хушнă. Фашистсем çав шутпа призывран пăрăннă итальянецсен ашшĕ-амăшĕсене массăллăн тыта-тыта хупаççĕ.

Римра та итальянецсем нумайĕшĕ çак мобилизацирен пăрăнса çÿреççĕ. Хулари гитлерла комендант кăларнă приказ тăрăх, хулари халăх влаçсене пĕлтермесĕр никама та хăй патне çывăрма кĕртмешкĕн пултараймасть. Приказа пăхăнман çынсене асаплантарса вĕлерессипе хăратаççĕ.

Призывран пăрăннă итальянецсем оккупантсемпе кĕрешекен итальянецсен ретне тăраççĕ. Диверси тата саботаж туни, патриотсем нимĕçсене тата вĕсене пулăшакан фашистсене тапăнни ÿсĕçемĕн ÿссе пырать. Генуя хули урамĕсенче кунсерен тенĕ пекех фашистсен пуçлăхĕсене вĕлереççĕ. Миланра фашизма хирĕç кĕрешекенсем фашистсен организацийĕн пуçлăхне — Резегана вĕлернĕ. Ăна пытарма каякансене патриотсем чÿречесенчен пăшалпа пенĕ.

Çурçĕр Итали халăхĕ Гитлера хирĕç кĕрешни оккупантсене хăратса пăрахнă. «Реджиме фашиста» ятлă хаçат çапла çырать: «Фашистла республика йĕркине хирĕç тăракан тăшмансем çав тери пуçаруллă кĕрешеççĕ», тет. Халăха хăратса, хаçат çакна асăрхаттарса çырать: «вĕсен ĕçĕсемшĕн заложниксене пĕр шеллемесĕр пере-пере пăрахма йышăннă», тет. Халăха ытларах хăратас тесе, хаçат малалла Милан хулинчи заложниксене массăллăн персе пăрахасси çинчен астутарса çырать.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене тапăннă.

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Боснин вăтам тата хĕвеланăç пайĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем нимĕç оккупанчĕсене хирĕç вăйлăн тăраççĕ, тăшмана пысăк çухатусем кÿреççĕ.

Боснин хĕвелтухăç пайĕнче Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар çаплах наступлени туса пырать. Сушак секторĕнче тăшмана Фужине тата Лич ятлă пунктсенчен хăваласа кăларнă.

Краньпе Есенице хушшинчи чугун çул çинче партизансем паровозсемпе вагонсем нумай пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Есеницепе Любляна хушшинчи чугун çул çинче поездсем 230 сехет хушши çÿреме пултарайман. Чи кирлĕ чугун çулсем çине темиçе хутчен те минăсем хурса тухнă тата çав çулсене тĕллĕн-тĕллĕн иксе антарнă. Партизансен отрячĕсем хĕçпăшалсем тата боеприпассем нумай тытса илнĕ, тăшман салтакĕсене темиçе çĕр çынна пĕтерсе тăкнă, амантнă е тыткăна илнĕ.

РУЗВЕЛЬТ БЮДЖЕТ ПИРКИ КОНГРЕСА ЯНĂ ПОСЛАНИ

ЛОНДОН, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Рузвельт бюджет пирки конгреса янă хăйĕн посланийĕнче пĕлтернĕ тăрăх, çĕнĕ бюджет çулĕнче çар расхочĕсем 90 миллиард доллар пулмалла, иртнĕ çулта 92 миллиард доллар пулнă. Çак бюджет пĕр çулталăк хушши, 1945 çулхи июлĕн 30-мĕшчен, пымалла.

Хальхи вăрçăра орудисем туса хатĕрлес тĕлĕшпе эпир тăвакан çĕнтерÿсем,—тенĕ посланире,— пĕтĕм тĕнчипе нумай фронтсенче татăклă çапăçусем патне илсе пыраççĕ. Çар производстви тĕлĕшпе эпир тăшмансенчен иртсе кайрăмăр, анчах пĕр производство кăна çĕнтерес ĕçе татса памасть-ха. Пирĕн питех те хаяррăн çапăçмалла пулать.

ТУРЦИН ГЕНЕРАЛЬНĂЙ ШТАБ НАЧАЛЬНИКĔ ЧАКМАК ВЫРĂНТАН ТУХНИ

АНКАРА, январĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Турцин генеральнăй штаб начальникĕ маршал Чакмак, ватăлмалли çулсем çитнĕ пирки, отставкăна тухнă. Ун вырăнне генеральнăй штаб начальникĕн хальхи заместительне Кязым Орбай генерала лартнă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВАРÇĂ

ЛОНДОН, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче кĕрешекен хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Сайдора çыранĕсем çывăхĕнче (Çĕнĕ Гвинея) японецсен çарĕсемпе çар хатĕрĕсене турттарса пыракан 11 баржăна шыва путарнă.

Глоустер сăмсахĕ районĕнче (Çĕнĕ Британи) американецсен тинĕс пехотин чаçĕсем Ворген заливĕ патнелле малалла куçса пынă. Ку участокри çапăçусенче японецсенне 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Союзниксен самолечĕсен пысăк соединенийĕсем Файси утравĕ çине тата японецсен Кахилири аэродромĕ çине (Шортленд утравĕ) бомбăсем пăрахнă.

Союзниксен çар карапĕсем çинчи артиллерийĕ Шортленд утравĕн çыранне пенĕ.

КĔСКЕН

● Америкăн Лăпкă океанра кĕрешекен подводнăй лодкисем Японин 10 суднине путарнă.

● Нимĕçсем Франци чугун çулĕсен наци обществинчен Германие татах 100 паровоз яма хушнă. (ТАСС)

Пĕлтерÿ

Январĕн 18-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) агитколлективсен руководителĕсем, докладчиксем тата беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать.

Доклад теми: «20 çул Ленинсăр, Ленин çулĕпе».

Докладчикĕ—И. Л. Лебедев юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Чăваш АССР НКВД-н Милици управленийĕ граждансене çакăн çинчен пĕлтерет: Совнаркомăн 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнчи 21547—Р № распоряженийе пурнăçа кĕртес шутпа ытти çĕре пурăнма куçакан çынсем хăйсен хваттерĕнчен тухса кайнипе паллă тумалли çакăн пек йĕрке пулать:

1. Ытти çĕре пурăнма куçакан çынсем хăйсен хваттерĕнчен тухса кайнине паллă тунă чухне паспорт сĕтелĕсем вĕсен паспорчĕсем çине прописка графи çине хăйне уйрăм штамп пусаççĕ.

2. Килхуçисем, управдомсем, комендантсем, пурăнма кĕнĕ çынсене çурт кĕнеки çине çырассишĕн ответлă пулса тăракан ытти çынсем пĕр-пĕр çын тухса кайнине паллă тутарма пынă чухне адрес листокĕсемпе пĕрле çав çынсен паспорчĕсене тата вĕсем урăх çĕре куçмаллине ĕнентерекен пĕр-пĕр документ (ĕçрен хăтарни çинчен калакан справка, тепĕр ĕçе куçма хушакан распоряжени, вербовка шучĕпе янине кăтартакан справка, милици панă пропуск, домуправлени справки) илсе пымалла.

АСĂРХАТТАРНИ: ытти çĕре пурăнма куçакан çынсен хăйсен пымалла мар, питĕ кирлĕ пулсан çеç пымалла.

3. Командировкăна, отпуска, дачăна, сывалма тата вĕренÿ сборне каякан çынсен паспорчĕсем çине тухса кайни çинчен штамп пусмаççĕ.

4. Ялан пурăнма куçса килнĕ çынсен паспорчĕсем çинче ĕлĕкхи вырăнтан тухса кайнине штамп лартса паллă туман пулсан, вĕсене çĕнĕ çĕрте ПУРĂНМА ÇЫРМАÇÇĔ.

5. Малтанхи вырăнтан тухса кайни çинчен штамп лартса паллă тумасăр çакăн пек çынсене çеç çурт кĕнекине çырса хума юрать:

а) çынсене паспорт памасăр вырăнтан килнĕ гражданскене, тухса килес умĕн çеç паспорт илнĕскерсене;

б) çар çыннисене, командовани хушнипе тепĕр çĕре куçаканнисене.

6. Гражданскем урăх çĕре пурăнма куçнине çак майпа паллă тăвас йĕркене 1944 çулхи февралĕн 15 мĕшĕнчен пуçласа пурнăçа кĕртеççĕ.

ЧĂВАШ АССР НКВД-н МИЛИЦИ УПРАВЛЕНИЙĔ.

ÇУРАКИНЧЕ АКМА ЛАЙĂХ ВĂРЛĂХСЕМ ХАТĔРЛЕР

Тухăçлă тырпул туса илессишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пирĕн республикăри колхозсем пысăк çитĕнÿсем турĕç. Уйхирсенче ăнса ÿснĕ тырпулсене кĕске вăхăтра, тăккаламасăр пуçтарса кĕртрĕç.

Колхоз хресченĕсен ĕçне халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ Октябрьти социализмлă аслă революцин 26 çул тултарни çинчен тунă докладра пысăк хак пачĕ. «Вăрçăн виççĕмĕш çулĕнче,—терĕ Сталин юлташ,—пирĕн çар апат-çимĕç çитменнине туймасть пулсан, халăха апат-çимĕç, промышленноç валли чĕрт-тавар парса тăраççĕ пулсан, çакăнта вара колхоз стройĕн вăйĕпе хăвачĕ, колхоз хресченĕсен патриотизмĕ палăрчĕ».

Халĕ республикăри колхозсенче çуракине хатĕрленеççĕ. Çуракине хатĕрленес енĕпе тумалли ответлă ĕçсенчен пĕри вăл—çуракинче акма паха вăрлăхсем хатĕрлесси пулать. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулхи тырпула пуçтарса кĕртес ĕççене ирттересси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленире колхозсене вăрлăх участокĕсем уйăрма, вăл участоксене мĕнле культурăсем акмаллине палăртса хума хушса хăварнă. Çав постановленипе колхозсене вăрлăх участокĕсенчен пухса кĕртнĕ тырра государство умĕнчи обязательствăсене пурнăça кĕртеччĕнех вăрлăх фончĕсене хывма ирĕк панă. Колхозсем вăрлăх фончĕсене хывса çитеричченех вăрлăх участокĕсенчен пухса кĕртнĕ тырра ниçта та расходлама пултараймаççĕ.

Пирĕн республикăри пур колхозсен тенĕ пекех вăрлăхлăх тырă акмалли участоксем пур. Республикăра пĕтĕмпе вăрлăхлăх çурхи тырăсем 25.895 гектар, пăрçа йышши культурăсем 8 186 гектар, техникăллă культурăсем 4.010 гектар тата кĕрпе тумалли культурăсем 2.331 гектар акса тунă. Нумай колхозсем вăрлăх участокĕсем çинче тухăçлă тырпул туса илчĕç. Çапла, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз вăрлăх участокĕсенчен вăтамран гектартан 14 центнер, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан çурхи тулă 17,57 центнер, сĕлĕ 19,1 центнер туса илнĕ. Кун пек колхозсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Колхозсенчи опыт çакна кăтартса парать: вăрлăх участокĕсене планла кăтартнă чухлĕ уйăрнă пулсан, тырпул тухăçĕ вăтам пулсан та, вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлеме май пулать.

Вăрлăх участокĕсем çине акнă тырпулсене пур çĕрте те тенĕ пекех вăхăтра пуçтарса кĕртнĕ. Халĕ ĕнтĕ колхозсем умĕнче вăрлăх фончĕсем вăхăтра хывса çитерес задача тăрать. Ку ĕçе те чылай районсенчи колхозсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Çĕрпÿ, Шăхасан тата ытти хăшпĕр районсем вăрлăх фончĕсене хывса çитернĕ ĕнтĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр районсем вăрлăх фончĕсене хывас тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлеççĕ-ха. Уйрăмах Шăмăршă, Кувакино, Пăрачкав, Калинино тата Канаш районĕсем кая юлса пыраççĕ. Асăннă районсенчи руководительсем тата колхоз председателĕсем кăçал та иртнĕ çулхи йăнăшсене тăваççĕ.

Вăрлăх фондне хывнă тырăсене вăхăтра сортламалла. Ку енĕпе Канаш, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай районĕсем юлса пыраççĕ.

Вăрлăхлăх тырăсене пăхса усрасси çине хытă çавăрăнса пăхас пулать. Иртнĕ çулта хăшпĕр колхозсем вăрлăх хывассине кая хăварса пычĕç. Çавна пула вара Пăрачкав, Чкаловски, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсем лайăх вăрлăхсемсĕр юлнă. Кăçал ун пек çитменлĕхсем пулмалла мар. Малта пыракан колхозсенче халех ĕнтĕ вăрлăхсене тасатса, вĕсем мĕнле шăтассине тĕрĕслесе пăхаççĕ.

Ишлей районĕнчи 74 колхоз вăрлăх фондне пĕтĕмпех хывса, вĕсене сортласа, кондицие çитернĕ тата актсем çырса кладовщиксене усрама панă. Елчĕк районĕнчи 44 колхоз вăрлăхсем çителĕклех хатĕрлесе сортласа хунă. Вăрнар, Елчĕк, Советски, Комсомольски, Ишлей тата ытти хăшпĕр районсенче МТС тата райçĕрĕç пайĕн агрономĕсене вăрлăхсене мĕнле пăхса усранине тĕрĕслеме колхозсем çумне çирĕплетнĕ.

Анчах та вăрлăхсем хатĕрлес тĕлĕшпе пур районсенче те тивĕçлипе ĕçлемеççĕ-ха. Хăшпĕр колхозсем ку таранах çитсе те вăрлăх фондне хывса çитермен. Канаш районĕнчи «Новая жизнь» колхоз вăрлăхсем 232 центнер хывас вырăнне 137 центнер çеç хывнă. Колхоз председателĕ Майоров вăрлăхсене сортлассине организацилес вырăнне вăхăта ĕçкĕре çÿресе ирттерет.

Республикăри колхозсенче уйрăмах клевер вăрлăхĕсем хатĕрлесси начар пырать. Тăвай, Чкаловски, Первомайски, Пăрачкав, Кувакино районĕсенче клевер вăрлăхĕсем пачах çук, мĕншĕн тесен вĕсенче нумай çулсем ÿсекен курăксем лайăх акса тăвассишĕн тивĕçлипе кĕрешмен. Çавна пула ĕнтĕ çав районсенчи хăшпĕр колхозсенче акса хăварнă клевера та пĕтĕмпех пуçтарса кĕртеймен. Çапла, Чкаловски районĕнчи «Первомайск» колхоз 6 гектар çинчи клевера пуçтарса кĕртмен.

Вăрлăх фончĕсем хывас ĕçе пур культурăсем тăрăх та çак сывăх кунсенчех вĕçлемелле. Вăрлăх участокĕсене акмалли культурăсене те çывăх вăхăтрах сортласа кондицие çитерес пулать. Вăрлăхсене уйрăм амбарсенче пăхса усрамалла. Вĕсене мĕнле пăхса усранине ревизи комиссийĕсен агрономсемпе пĕрле тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. МТС-семпе райçĕрĕç пайĕсен агрономĕсене колхозсем çумне çирĕплетсе, вĕсем çине вăрлăхсене сортласа хатĕрлессишĕн колхоз председателĕсемпе пĕр тан ответлăх хумалла. Вăрлăхсене пăхса усранă çĕрте çитменлĕхсем палăрсан, вĕсене пĕтерме çийĕнчех татăкне пăсăласран, йĕпенесрен лайăх мерăсем йышăнмалла.

Тухăçлă тырпул туса илесси вăрлăх пахалăхĕнчен нумай килет. Лайăх, паха, таса вăрлăхсем—тухăçлă тырпул никĕсĕ пулса тăраççĕ. Çавăнпа та çуракине хатĕрленнĕ тапхăрта партипе совет организацийĕсен, çĕрĕç органĕсен тата колхоз руководителĕсен вăрлăхсем хатĕрлесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

П. КОЗЛОВ,
ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн инструкторĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00009 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.